Определение участников аукциона состоится **25 августа 2010 года по месту нахождения организатора конкурса:** 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, малый зал заседаний, 3 этаж. Время проведения открытого аукциона (по московскому времени): Лот №1- 8.40, Лот №2 – 9.00, Лот №3 – 9.20, Лот №4 – 9.40, Лот №5 – 10.00, Лот №6 -10.20, Лот №7 – 10.40

# Тавралăх тирпейлĕхĕ – пĕрлехи пуянлăх

**Кашмашсен ырă пуҫарăвĕ**

Шыв пур чухне ăна варалассинчен пăрăнмастпăр пулсан, шăрăх кунсем ҫитсен вара тӳпенелле тинкерсе пĕр тумлам та пулин ҫумăр пулать-ши тесе кĕл тăватпăр. Типĕ кунсенче ҫеҫ шыв пахалăхĕпе унăн пĕлтерĕшĕ куҫ умне яр уҫҫăн тухаҫҫĕ.

– 30 ҫул каялла хупăннă Отар ялĕнчен эпир Кашмаша куҫса килтĕмĕр. Ҫĕнĕ кил-ҫурт Ҫамрăксен урамĕнче ҫавăртăмăр. Илемлĕ вырăн, ним калама ҫук. Кил хушшинчен тух та 50 метрта пĕве. Хур-кăвакал ĕрчетме питех те меллĕ. Ҫак хушăра пĕве тĕрлĕ ăпăр-тапăрпа тулмаллипех тулса ларчĕ. Вырăнта пурăнакансене ăна тасатма чĕнсе район хаҫачĕн сотрудникĕ Анатолий Белов питĕ тĕрĕс турĕ, – терĕ пĕвере шăрăх ҫанталăкпа шыв чакнă май тухнă тимĕр-тăмăрпа вак чулсене, вутă-шанкăна пуҫтарса пĕтернĕ хыҫҫăн Елена Яковлевна Степанова ĕҫ ветеранĕ.

– Тирпейлĕхе упрасси хамăр алăра ĕнтĕ, – хутшăнчĕ калаҫăва В. Замятин.

Икĕ сехете тăсăлнă пĕрлехи ĕҫре А. Белов, Н. Чаплина, А. Александрова, В. Замятин, Ю. Замятин, А. Замятин, М. Толикин, Г. Суриков, Л. Сурикова, В. Майорова тăрăшса ĕҫлерĕҫ. Ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле ачисем те, мăнукĕсем те пĕве тасатассинчен пăрăнса юлмарĕҫ.

Ĕнер ăпăр-тапăрпа тулнă пĕве ҫине паян пăхма та кăмăллă. Кашмашсем! Ҫак пĕве патĕнчен иртсе ҫӳрекенсем! Пĕрре тунă тирпейлĕхе упраса хăварар! Илемĕ хамăршăнах-ҫке!

Кашмашсен ырă пуҫарăвне кам черетпе алла илĕ-ши?

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**





*Пĕрле пулса пĕве тасатасси – нумай вăхăта тăсăлман ĕҫ. Тирпейлĕхĕ хамăршăн!*

*«Атте-аннепе асаттеасаннерен эпир те юлмастпăр», – теҫҫĕ Данилăпа Кирилл Замятинсем.*

*Тава тивĕҫлĕ зоотехник Н. Чаплина обществăлла ĕҫре те хастар.*



**Вулавҫăсем хĕрӳ ыйту ҫĕклеҫҫĕ**

# Эпир шывсăр, эсир мĕнле?

Шăрăх ҫу кунĕсем тăраҫҫĕ. Ҫак тапхăр ялта пурăнакансене нумайăшне пурнăҫ ҫине шыв виҫипе пăхма вĕрентрĕ. Мĕншĕн хваттерсенче шыв пур, анчах ялта ҫук? Ҫав вăхăтрах хулара шыв перекетлеме пĕлни курăнмасть...

Шупуҫ тени «шыв пуҫламăшĕ» тенине пĕлтерет. Мĕн авалтанпах пирĕн ялта чаплă ҫăл куҫсем тăнă пиркиех Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче вырнаҫнă пирĕн яла Шупуҫ ят панă. Наукăпа техника прогресĕ питех те малалла утăмланă вăхăтра кăҫал вара Шупуҫ халăхĕ шывсăр пурăнма вĕренет. Ку тăрăхра ҫăл куҫсем те типмен, ял ячĕ те улшăнман, Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăха шывшăн вăхăтра укҫа-тенкĕ тӳлетпĕр – ҫав-ҫавах ялта шыв ҫук!

Юлашки ҫулсенче цифрăллă технологи аталаннă, нанотехнологи пирки каҫса кайса калаҫнă вăхăтра эпир те килсенче, хулари пек, пăрăхран юхакан таса шывпа усă кураттăмăр. Кăҫалчен... Кăҫал Шупуҫ ҫыннисем тăтăш шыравра: кăнтăрла та, ҫĕрле те шыв пăрăхĕнчен шыв тумланмасть-ши тесе кĕтеҫҫĕ. Ывăнса ҫитрĕҫ...

Кăҫалхи пек шăрăх ҫанталăкра шывсăр пурăнма питех те йывăр. Чăн малтанах шыв хамăра ĕҫме, апат-ҫимĕҫ пĕҫерме кирлĕ. Пахча ҫимĕҫе шăварма та, ҫăвăнма-тасалма та, кил хуҫалăхри ытти ĕҫсене пурнăҫлама та шывсăр май ҫук. Шăрăх вăхăтра пушар тухас хăрушлăх та пысăк. Ял варринче инкек сиксе тухсан шыв шыраса ăҫта ҫити каймалла-ши?

Чи тĕлĕнтермелли вара ҫакă: Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăх предприятийĕнче ĕҫлекенсене пире хумхантаракан ыйтусем интереслентермеҫҫĕ, хăйсен ĕҫĕнчи ҫитменлĕхсене курасшăн та, тӳрлетесшĕн те мар вĕсем. Шыв пулмасан та, «Жилкомсервис» общество директорĕ В. Купцов пире уншăн укҫа тӳлеттерет. Кăнтăрла пулмасан та ҫĕрле ҫывăрмасăр шыв сыхлама хушаҫҫĕ ЖКХ ĕҫченĕсем. Юлашки икĕ-виҫĕ эрнере ҫĕрле те пĕр тумлам та юхнине асăрхамарăмăр. Анчах пире ĕненмеҫҫĕ. Килсе пăхакан та ҫук. Юсав ĕҫĕсем те тумаҫҫĕ. Шывшăн укҫа пуҫтарма вара куллен килсе ҫӳреҫҫĕ. Уйăхĕпе шывсăр пурăнсан та шывпа усă курнăшăн укҫа тӳлеттереҫҫĕ. Тĕлĕнмелле мар-и? Шывпа ҫителĕклĕ усă кураймастпăр пулсан пирĕн уншăн мĕншĕн тӳлемелле?.. Юлашки икĕ эрнере ҫĕрле те пĕр тумлам шыв юхнине те асăрхаман.

Шывĕ ҫук тата унпа ҫителĕклĕ усă кураймастпăр пулсан пирĕн мĕншĕн укҫа тӳлемелле? Хулара пурăнакансене, тĕслĕхрен, шыв пулманнишĕн ЖКХ маларах пĕлтерет, ҫав вăхăтшăн укҫа тытмасть. Эпир вара мĕнпе айăпа кĕнĕ, пирĕнтен ҫапла кулма юрать-и?

«Шыв хуҫи» Вячеслав Алексеевич Купцов пирĕн урамра пурăннă пулсан шывĕ пулатчĕ пулĕ-ха. Ун чухне инҫетри урамсене е ҫăла, ҫырма-ҫатрана ҫĕклем витресемпе, бидонсемпе-каткасемпе шыв шыраса ҫӳремен пулăттăмăр, анчах...

Кăҫал питĕ шăрăх. Ҫавăнпа та пахчара та, улăхра та курăк саралса-типсе кайрĕ. Ял ҫыннине вара уйрăмах пахча ҫимĕҫ шăварма шыв нумай кирлĕ. Ҫамрăксем тата камăн транспорт-тавраш пур, аякран та шыв ҫĕклеме-турттарма пултараҫҫĕ темелле. Ватăсен вара мĕн тумалла-ши? Вĕсен те хăяр-помидор туса илес килет!

В.А. Купцов ĕҫлекен чаплă ҫуртра крантанах таса шыв юхать пуль? Пирĕн яла хăҫан пырса курĕ-ши вăл?

Чун тăвăнса ҫитнипе ҫырнă пирĕн ҫыру Муркаш районĕ пуҫлăхĕ куҫĕ умне пулсан аванччĕ. Тен пысăк пуҫлăхсем пирĕн ыйтусене татса парĕҫ? Шупуҫ ҫыннисем те шывпа «шурă» ҫынсем пек ҫителĕклĕ те кирлĕ чухлĕ усă курасса кĕтеҫҫĕ.

**Н. ВАРЮХИНА, Г. АНТИПОВ, Г. ЦВЕТКОВА (пурĕ 23 ҫын алă пуснă).**

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060402:160, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Ленина, для установки и эксплуатации шиномонтажа, площадью 87 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

# Шăрăх кунсем тата пыл илесси

**Утарҫăсемпе калаҫатпăр**

***Кăҫалхи ҫу кунĕсем пыл хурчĕ ĕрчетес отрасль ҫине те хăйне евĕр витĕм кӳреҫҫĕ. Пĕтĕмĕшле лару-тăру ҫăмăл мар. Иртнĕ ҫулсенче ҫуллахи пыл пухас тĕп тапхăр улăх-ҫарантан (Элĕк, Куславкка, Вăрмар, Ҫĕрпӳ, Канаш районĕсем) тата ҫăкаран (Ҫĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне, Пăрачкав, Улатăр районĕсем) пулнăччĕ. Кăҫалхи вăрăма тăсăлнă шăрăх кунсем пыл илме пулăшакан ӳсен-тăрансем нектар кăларассине чакарчĕҫ. Ҫакă таварлă пыл илессине палăрмаллах пĕчĕклетрĕ.***

Нумай регионсенче кăҫал пыл хурчĕсем ҫăка ҫинче 3-5 талăк ҫеҫ вĕҫрĕҫ. Ытти ҫулсенче ку кăтарту 12-14 талăкпа танлашатчĕ. Ир пуҫланса вăрăма тăсăлнă шăрăх кунсем ҫăка чечеке ларассине хăвăртлатрĕҫ. Етĕрне районĕнче ҫăка ҫĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕнче чечеке ларчĕ. Ҫак вăхăта пыл хурчĕсен нумай ҫемйи нектар пуҫтарма вĕҫме ҫителĕклĕ вăй пухаймарĕ. Ҫавăнпа та «ирлесе» пыл пухассипе вăйлă ҫемьесем ҫеҫ ҫителĕклĕ ĕҫлеме пултарчĕҫ, вăйсăртараххисем ҫак пыла пухас ĕҫе хутшăнаймасăрах юлчĕҫ.

Эпир хальлĕхе палăртнă тăрăх пĕтĕмĕшле пыл илесси кăҫал ытти ҫулхисен ҫурри е сахалрах та пулма пултарать.

Пыл илессипе йывăр лару-тăру пулнă пулсан, вĕлле хурчĕсене хĕле хатĕрлессипе тата вĕсене сыхласа хăварассипе умра тăракан ыйтусем татах та ҫивĕчрех. Вăрăма тăсăлнă шăрăх кунсем паразитсен аталанăвне анлă ҫул пачĕҫ.

Паянхи кун шăрăх ҫанталăка пула вĕллесене ҫĕнĕ шăркасемпе нектар ҫителĕксĕр кĕрет. Тулли мар апатлану пыл хурчĕсен матки ҫăмарта тăвасласха чакарать. Ку вара ҫемье аталанăвĕ ҫине тӳрремĕнех витĕм кӳрет.

Пыл хурчĕсене утарҫă мĕнпе пулăшайрать-ха паян? 2 султан аслăрах маткăсене улăштармалла, магазинсен ҫине вырнаҫтарнă пайсене татах 7-10 кун хушши лартмалла (ҫакă вĕллесем вĕриленсе каясран пулăшать), апат запасĕсене сиропсем хурса ӳстермелле те унта маткăсен ҫăмарта хураслăхне вăйлатма ковитсанпа пчелодар тата пчелкăпа ноземат препаратсем хушмалла, сиропсене вĕтетнĕ белокпа пуянлатма вĕтетнĕ перга тата шăрка хушса памалла, сăвăссенчен сыхлав ĕҫĕсем туса ирттермелле, профилактика тĕллевĕсемпе хĕле хатĕрленĕ кашни ҫемьене варвитти чирĕнчен сыхласа ноземат хушнă 5 литр сироппа апатлантармалла.

Калаҫмалли тата сӳтсе явмалли нумай. Ҫавăнпа та пыл хурчĕ ĕрчетекенсене утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче 10 сехете «Моргаушавтотехсервис» уҫă акционерлă обществăн актовăй залне пухăнма чĕнетпĕр. Калаҫу пыл хурчĕсене ҫитес хĕл кунĕсене епле хатĕрлесси пирки пулĕ.

**Г. МАКСИМОВ,**
**«Пыл хурчĕсем ĕрчетекен агентство» уҫă акционерлă обществăн генеральнăй директорĕ.**

**Килти хушма хуҫалăх**

# Пĕтĕ амасене пăхасси

***Сурăхсем усрама пуҫларăм. Кĕр кунĕсем те ҫывхараҫҫĕ. Кĕр ҫитсен сурăхсен пăранламалла. Ҫак вăхăтра вĕсене пăхас ĕҫре хăйне евĕрлĕхсем пурах-тăр, анчах эпир вĕсене ăйлтах пĕлместпĕр. Каласа парсан лайăхчĕ.***

**Вальăпа Иван СМИРНОВСЕМ.**

Тĕрĕс ыйту хускататăр. Хура кĕркуннепе хĕл пуҫламăшĕ – сурăхсем йышлă пăранламалли тапхăр. Унчен вăхăт пур-ха тесе вара алă усса пурăнмалла мар. Путексем сывă та ҫирĕп кĕлеткеллĕ ҫуралччăр тесен сурăхсене паян лайăх апатпа тăрантармалла. Пăранлас умĕн уйăх ҫурă е икĕ уйăх юлсан вĕсене хырăмлăхра лайăх ирĕлекен паха апат памалла.

Уяр ҫанталăкра сурăхсене уҫăлма кăларăр. Кун пек чух вĕсен апат лайăх анать, пăранлама та ҫăмăлрах пулать. Хырăм ан ӳктĕр тесен ҫак йĕркесене пăхăнмалла:

– ҫĕрĕк пахча ҫимĕҫ памалла мар;
– силос, тымар ҫимĕҫ сахалрах пултăр;
– кăвакарнă апат сиенлĕ;
– ытла сивĕ шыв юрăхсăр.

Сурăхсене тытакан витере ай сарăм хулăн та таса пулмалла. Витере чĕрĕ сывлăш пуласран асăрханмалла. Витĕр ҫил ан пултăр тесе тăрăшмалла. Ҫакна валли паянах витере юсав ĕҫĕсем ирттермелле. Пăранланă вăхăтра витере 14-17 градус ăшă пулмалла.

# Кивĕ карас пылĕ

***Хурт ҫăкăрне (перга) ҫиме юрать-и тата унăн сиплĕ енĕсем пур-и?***

**Ф. ПЕТРОВ.**

Ҫакнашкал майпа юхтарса илнĕ пыла, паллах, ҫиме юрать. Вăл питĕ сиплĕ. Хурт ҫăкăрĕллĕ (перга) пыл ахальнинчен темиҫе хут усăллăрах. Чечек тусанĕнчен вăл сахăр ытларах пулнипе уйрăлса тăрать. Ӳсен-тăран тусанĕнче пур аминокислота пулмасан та пултарать. Ҫав вăхăтрах вĕллерен илнĕ хурт ҫăкăрĕнче мĕн пур аминокислота пур.

Хурт ҫăкăрĕ ҫын организмне лайăх витĕм кӳрет: иммунитета вăйлатать, ывăннине ирттерет. Унпа колит чирĕнчен, вар хытни вăраха тăсăлнинчен, гепатитран, простатитран, импотенцирен, юн тымарĕсене сипленĕ чухне, атеросклероза хирĕҫ кĕрешме, пуҫ мими шыҫсан, нерв тата психика чирĕсем аптăратсан усă кураҫҫĕ.

**В. ИЛЬИН**
**вылăх тухтăрĕ пухса хатĕрленĕ.**

# Шăрăхра мĕн ĕçме юрать тата юрамасть

Çын организмне куллен 2 - 2,5 литр шыв кирлĕ. Шăрăх çанталăкра çак виçе 4 литра çити ӳсет.

Организмра шыв çитмесен пуç çаврăнать, ыратать, çын ĕçлеслĕхĕ чакать. Чирсем хăй çинчен аса илтереççĕ. Чĕре, пӳре çине витĕм кӳреççĕ. Çавăнпа шăрăхра шыв çителĕклĕ ĕçмесĕр май çук. Анчах тухтăрсем пĕлсе ĕçмелли çинчен калаççĕ.

Шăрăхра уйрăмах çак 5 тĕрлĕ шĕвеке ĕçме сĕнеççĕ:

**Шыв**. Тухтăрсем ытларах чухне шыв ĕçме сĕнеççĕ. Минерал шывĕ усăллăрах, анчах вĕсенче тăвар кăшт кăна пулмалла. Сиплекен минерал шывне (кунта литр пуçне 10 грамм тăвар) тухтăр хушсан кăна ĕçме юрать.

Сахал газлă е газ пачах çук шыва ĕçме сĕнеççĕ. Мĕншĕн тесен шăрăхра çын хытă тарлать. Тарпа пĕрле вăл шыв çеç мар, тăвар та çухатать. Минералка çук пулсан ахаль шыва кăшт тăвар ярса ĕçмелле.

Шăрăхра ĕçмелли чи лайăх шĕвек – лимон сĕткен хутăшĕ. Ăна килтех хатĕрлеме пулать. Пĕр стакан шыва лимонăн тăваттăмĕш пайне пăчăртаса кăларăр. Кунта чей кашăкĕпе кăштах сахăр хушăр тата пĕр чĕптĕм тăвар сапăр. Çак шĕвеке кашни çур сехетре кăштах сыпăр.

**Чей**. Шăрăх кун çав тери пулăшать. Анчах чейне сахăр сахал ямалла. Лимон хушсан питĕ аван. Хура е симĕс чей – уйрăмлăх çук. Сивĕ е вĕри чей – уйрăмлăхĕ çук. Çав хушăрах вĕри чей лайăхрах пулăшнине калаççĕ.

**Квас.** Унта углекислота тата аминокислота пур. Вĕсем шыв ĕçес килнине ирттереççĕ. Кваса организм лайăх йышăнать.

Килте тунă квас çеç усăллă. Лавккара сутакан газлă квас пирки çапла калаймăн. Вĕсене тĕрлĕ консервант, тутă тата тĕс кĕртекен япаласем хушса тултараççĕ. Кун пек квас пушшех ĕçтерет.

**Сĕткенсем (сок).** Вĕсем шăрăхра усăллă. Тин кăна юхтарнă сĕткен уйрăмах лайăх. Çурмалла шывпа хутăштарни аван. Пан улми, чие çырли (вишня), грейпфрут, слива сокĕсем тата клюквăпа хурлăхан морсĕсем шăрăхра уйрăмах пулăшаççĕ.

Сельдерей сĕткенĕ ĕçме те сĕнеççĕ. Анчах ăна пĕр рюмкăран ытла ĕçмелле мар.

Медиксем сĕткенсене выçăлла е апат çиме лариччен, е çинĕ хыççăн 1 – 1,5 сехетрен ĕçме хушаççĕ. Кунне икĕ е виçĕ стаканпа çырлахмалла.

Лавккара пакетсенче сутакан соксенчен усси çук.

**Турăх, уйран**. Вĕсенче органика кислоти пуртан вĕсем шыв ĕçес килнине лайăх ирттереççĕ. Организм вĕсене лайăх йышăнать, вĕсем пыршăлăх микрофлорине те пулăшу кӳреççĕ. Анчах вĕсем нумай ларнăскерсем пулмалла мар.

Шăрăхра сĕт ĕçме те юрать. Шывпа хутăштарсан лайăх.

**Çак шĕвексене шăрăхра ĕçме сĕнмеççĕ.**

**Алкоголь** чĕрепе юн тымарĕсене йывăрлăх кӳрет. Эрех ĕçнĕ çын ытларах тарлать.

**Сăра** та чĕрепе юн тымарĕсене çăмăллăх памасть. Çавăнпа ăна пĕрик кĕленчерен ытла ĕçме хушмаççĕ.

Çавна пĕлсе тăрăр, алкоголь çынна тарлаттарать. Апла пулсан унпа шыв ĕçес килни иртмест.

Медиксем çапла пĕлтереççĕ: газ янă тутлă шыва шăрăхра та, ытти чухне те ĕçмелле мар. Вăл шыв ĕçес килнине ирттермест, ĕçме хистет кăна.

**Канашсем**. Ĕçнĕ шыв ĕçес килнине тӳрех ирттермест. 10 – 15 минут кĕтме тивет. Çавăнпа тӳрех шыв нумай ĕçсе тултармалла мар.

Шыв виçесĕр ĕçмелле мар. Организмра шыв ытлашши пулни сиенлĕ.

Чĕрепе аптракансене 1,5 литр ĕçме сĕнеççĕ е çак нормăна тепĕр стакан чухлĕ ӳстерме юрать.

Шывпа сĕткенсене çав тери сивĕтсе ĕçме юрамасть. Кун пек чух вĕсем сиен кӳреççĕ.

# Маçтăрсен хисепĕ ӳсет

## Спорт

Июлĕн 14-16-мĕшĕсенче Шупашкарта хулана йĕркеленĕренпе 500 çул çитнин ячĕпе хисепленекен культурăпа кану паркĕнче велосипедпа ăмăртассипе – маунтинбайк енĕпе – Раççейре мала тухассишĕн ăмăртусем иртрĕç. Çанталăк шăрăх тăнине, трасса йывăр пулнине пăхмасăрах старта 1996–1997, 1994–1995, 1992–1993 çуралнă яшсемпе хĕрсем, 23 çулчченхи çамрăксем, арçынсемпе хĕрарăмсем тухнă.

Ăмăртусен иккĕмĕш кунĕнче ачасемпе çамрăксен Муркашри В. Егорова ячĕпе хисепленекен спорт шкулĕнче пĕлӳ пухнă Раççей спорт маçтăрĕн кандидачĕ Людмила Филиппова 1992–1993 çулсенчи юниоркăсем хушшинче ăмăртса пăхăр медаль илме тивĕç пулнă, велосипед спорчĕ енĕпе «Раççей спорт маçтăрĕ» ята илме кирлĕ нормативне пурнăçланă. Спортсменкăна Раççей тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ В.Н. Краснов, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ И.Б. Воробьев хатĕрленĕ.

Унччен вара, июль уйăхĕн пуçламăшĕнче, И.В. Воробьевăн воспитанници, Раççей спорт маçтăрĕн кандидачĕ Елена Елизарова ухăран тĕл перессипе Раççей чемпионатĕнче Раççей спорт маçтăрĕн нормативне пурнăçлама пултарнă.

**А. ПЕТРОВ,**
**директорăн вĕрентӳпе воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумĕ.**

## Объявления


**_СПЕЦИАЛЬНОЕ ПРЕДЛОЖЕНИЕ ОТ СП «ПОТАП»_**




**ОКНО «ПОД КЛЮЧ» В ПАНЕЛЬНЫЙ ДОМ – 9500,00 руб.**

Спецификация: окно поворотно-откидное размеры 1300(1320) х1400, москитная сетка, стеклопакет 2 стекла, подоконник, отлив, паро-гидро изоляционные ленты, откосы, установка, доставка по с. Б.Сундырь, с.Вииоватово, г.Козьмодемьянск –

_ВСЕ ЭТО ВКЛЮЧЕНО В СТОИМОСТЬ!_

Салон продаж «ПОТАП».
Адрес: 1. с. Большой Сундырь, ул. Новая, 8.
Тел./факс: (83541) 69-3-25



**ЗАЙДИ!**
**ЗАКАЖИ!**
**И ЗАБЕРИ**
**СВОЮ ПЛАЗМУ...**
**СП «ПОТАП»**

_ПРЕДЪЯВИТЕЛЮ КУПОНА МОСКИТНАЯ СЕТКА НА ОКНО ФАВОРИТ БЕСПЛАТНО!_

_ИЛИ_

_ЗАМЕР КУХНИ БЕСПЛАТНО!_

_Условия розыгрыша: каждый, заказавший в СП «ПОТАП» окна, двери, отделочные материалы или мебель на сумму 10 000 рублей, получает 1 купон для участия в розыгрыше плазменного телевизора, который пройдет 1 октября 2010г._
_Чем больше покупка – тем больше шансов выиграть главный приз._

**_Салон продаж «ПОТАП» Моргаушский район, село Большой Сундырь, ул. Новая, 8. (83541) 69-3-25, 908-842-0929, 909-366-6790_**


Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения»:

- с кадастровым номером 21:17:170203:96, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:170203, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв. м.;
- с кадастровым номером 21:17:170203:94, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:170203, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв. м.;
- с кадастровым номером 21:17:170203:95, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:170203, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:300102:143, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кораккасы, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:300102, для установки торгового павильона, площадью 20 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:070301:180, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:070301, для установки торгового павильона, площадью 20 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

**Продается двухкомнатная квартира в с. Моргауши по ул. 50 лет Октября, площадь 43,6 кв. м. Тел.: 8-919-662-20-11, 8-927-666-04-90.**

* * *

**ЗАО «МСО «Моргаушская» реализует готовые квартиры, требуется машинист автомобильного крана.**
**Тел.: 69-8-59, 63-1-19.**

## Прогноз погоды с 24 по 30 июля

www.yandex.ru

| сб 24 | вс 25 | пн 26 | вт 27 | ср 28 | чт 29 | пт 30 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ясно | переменная облачность | переменная облачность | переменная облачность | переменная облачность | ясно | переменная облачность |
| +37 | +38 | +38 | +38 | +39 | +40 | +39 |
| +22 | +23 | +21 | +25 | +23 | +24 | +26 |

## Пĕлтерӳсем. Объявления






**ТРЕБУЮТСЯ: в г. Люберцы Московской области водители категории «Д» на автобусы, кондукторы рейсового автобуса, мед. сестры. Соц. пакет, общежитие, больничный, столовая, душевая, стиральная машина, хорошие условия, высокая зарплата. По трудовой книжке. Тел.: 8-926-6-333-222.**

**Только 30 июля с 9.00 до 17.00 часов покупаем волосы до 37000 руб за 1 кг. не короче 27 см., часы желтые на запчасти. Адрес: ул. Гагарина, 2, парикмахерская «Ольга».**






**Предприятие продает щебень фр. 40-70 М 1000 и песок строительный в любом количестве с Шешкарской пристани. Имеется возможность доставки до потребителя. Тел.: 8-927-669-26-10, 8-927-669-26-02. 5-8.**

* * *

**Куплю квартиру за 742400.00 руб. не меньше 33 кв. м. Тел.: 8-908-306-29-11, 60-0-96, 60-0-97.**

* * *

**Покупаем волосы. Дорого! 30 июля (в пятницу) с 9-00 до 16.00 час. в Доме быта, ул. 50 лет Октября, д. 4, парикмахерская, 2 этаж. Тел.: 8-903-358-85-17.**

* * *

**Продаю пиломатериал обрезной (хвоя), листы оцинкованные, профнастил, цемент, шифер. Адрес: с. Моргауши, магазин «Рука мастера». Тел.: 8-903-346-40-58. 1-5.**

* * *

**Керамзитобетонные блоки, щебень гранитовый, известковый, керамзит, гравмасса, песок речной, карьерный строительный, торф, с доставкой.**
**Тел.: 8-906-383-65-13, 8-903-389-98-62. 3-8.**

* * *

**Продаю керамзитобетонные блоки, песок, гравмассу, бой кирпича с доставкой.**
**Тел.: 8-905-347-99-15, 87-66-95. 3-5.**

* * *

**Срубы банные (хвоя, липа) в наличии и на заказ. Пиломатериалы (хвойные, лиственные) в наличии и на заказ. Печки банные. Тел.: 8-927-667-60-61, 8-927-846-01-08 1-10.**

* * *

**Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), железобетонные изделия, асфальт. Возможна доставка. Тел.: (8352)57-42-81, 57-33-83, 8-903-358-36-23. 3-8.**

* * *

**Продаю кольца колодезные. Цена 1500 руб., с доставкой. Бурение колодцев. Тел.: 89876664140. 8-9.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 4-5.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 4-9.**

* * *

**Раствор, бетон, керамблоки от производителя, цемент. Доставка. Тел.: 8(8352)507-805, 8-903-358-65-34, 8-903-345-66-34. Сертифицировано. 16-17.**

* * *

**Требуется продавец. Тел.: 8(8352)67-21-37. 2-3.**

* * *

**Продается земельный участок с летним домом, садом в с. Моргауши. Тел.: 8-927-992-31-22.**

* * *

**Продается двухкомнатная квартира в д. Москакасы. Общая площадь – 48,5 кв. м, жилая – 26,1 кв.м. Цена 850 тыс. руб. Тел.: 8-927-844-78-42, 8-937-390-95-78, 8-927-842-91-97. 1-2.**

* * *

**Сурăхсем, такасем тата сакăр уйăхри вăкăр сутатпăр. Тел.: 8-937-374-03-42, 8-937-371-15-16.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 23.07.2010 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 3871.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.